

# П.ХУСАНКАЙ - Г.АЙХИ

*1950 çулхи июлĕн 18-мĕшĕ*

Типографире, Пионерсен Тĕп Çуртĕнче, краеведени музейĕнче, картинăсен галерейинче пултăмăр. ПТÇ-че писательсемпе тĕл пулу пулса иртрĕ. Малтанах П.Хусанкай кĕрсе ларчĕ. Кăтра çӳçĕнчен анчах палласа илтĕм, пĕрре те унччен курнă чухнехи пек туйăнмарĕ. Экскурсантсем ăстанăстан пулнине ыйтса пĕлсен (эпир Елчĕк, Советски вăтам шкулĕсем), çӳçне турапа якатса ларнă май, тӳрех хытă кăшкăрса ыйтрĕ: «Лисин ăçта?» — «Кунта!» — ответлерĕм эпĕ, малтах лараканскер. Манпа, ачасемпе каласрĕ, эпĕ мĕн çырни çинчен ыйтса пĕлчĕ. «Санăн сăввусем те манра, çырăву та пур», — тет. Унтан ытти писательсем кĕчĕç.

...Тĕл пулу пĕтсен писательсем тухса кайма тытăнчĕç. П. Хусанкай экскурсовод манпа калаçнине курса: «Лисин, мĕн каламалли пур сан, кала», — терĕ. Эпĕ çамрăк авторсене пулăшса пырас ĕç çителĕксĕрри çинчен каларăм. Семен Васильевича мана 1946 çулта ответ панăшăн чĕререн тав турăм. Элкер савăнса кайрĕ, кулса калаçма пуçларĕ...

...Тĕл пулу пĕтсен Талвирпа пĕрле Краснов И.-па иксĕмĕр Пичет çуртне кайрăмăр.

«Ялав» редакцийĕнче Хусанкайпа Хури анчахчĕ. (Алка çук. Вĕсем Агаковпа иккĕшĕ Атăл леш енне (Кувшинкăна)

КУН КĔНЕКИНЧЕН

канма кайнă-мĕн.) Хусанкай Хури сăввисене тĕрĕслерĕ. Хăй епле çырма тытăнни çинчен каласа пачĕ. Малтан унпа пĕр класра вĕренекен аппăшĕ сăвăсем çырнă. «Астăватăп, пирĕшти çинчен Лермонтов майлă çырнăччĕ:

Пирĕшти вĕçсе пыратчĕ,
Юрăсем юрлатчĕ.
Вĕçрĕ-вĕçрĕ те юрларĕ,
Пурнăçа мухтарĕ.

Эпĕ çав тери кĕвĕçрĕм. Унтан хам çырма шутларăм. Пӳрт умĕнче ларакан катка ăшне кĕрсе лартăм, çиелтен хупларăм та çырма тытăнтăм. «Ку пурнăç — тĕлĕк çеç, чăн пурнăç инçетре, вăл кайран тин килет», — тесе çырнăччĕ. Эпĕ ун чухне 12-ре пулнă», — каласа пачĕ Петр Петрович. Унтан ман сăвва вуласа тĕрĕслерĕ. «Долларпа» «тăллăр»-шăн мухтаса лăпкарĕ. Юлашки строфана ырларĕ.

*1950 çулхи ноябрĕн 15-мĕшĕ*

Парткабинета кĕрсен республика хаçачĕсем çинче Я.Г. Ухсайпа П.П.Хусанкай писательсене Халăх поэчĕ ятне пани çинчен указ вуларăм. Çавăнтах П.П.Хусанкай патне сăвăласа çыру яма шутларăм. Çул çинче 1 куплет шутласа хутăм. 24 сехет çитиччен 8 куплет çыртăм.

*1950 çулхи ноябрĕн 16-мĕшĕ*

Паян литература кружокĕн членĕсен ячĕпе П.П.Хусанкайпа Я.Г. Ухсай патне саламлă çырусем çырса ятăмăр. Эпĕ хам Хусанкай патне сăввăма ятăм.

*1950 çулхи ноябрĕн 26-мĕшĕ*

Унтан П.П.Хусанкайпа «Доминона» кайса иксĕмĕр карточка ӳкерттертĕмĕр. Укçа тӳлеттермерĕ. «Пуйсан тӳлĕн», — тет.

*1950 çулхи ноябрĕн 27-мĕшĕ*

Ялкирпе иксĕмĕр Хусанкай хатĕрлекен «Мир сборникĕ» валли пĕр пакет сăвăсем парса хăвартăмăр (Талвир урлă). 8-48 №-лĕ телефонпа Хусанкайпа калаçрăмăр. Сыв пуллашрăмăр.

*1950 çулхи декабрĕн 12-мĕшĕ*

...П.П.Хусанкайран тахçанах кĕтнĕ çыру çитрĕ. Икĕ сăн ӳкерчĕк чиксе янă. Лайăх ӳкнĕ, анчах та эпĕ унта питех те çамрăк пек, пĕчĕк ача пек. Хусанкая çыру çыртăм. «Анне телейне» те ятăм...

*1951 çулхи февралĕн 15-мĕшĕ*

Каçпа Шупашкартан «Мир сборникĕ» тухнине пĕлтерчĕç. «В сборнике напечатаны стихотворения следующих авторов: народных поэтов С.Эльгера, П.Хузангая и Я.Ухсая и поэтов: С.Шавлы, Н. Евстафьева, И.Малгая, М.Хури, Г.Лисина, П.Ялгира, Ал. Афанасьева», — тесе вулать диктор. Эпĕ, сĕтел хушшинчен тухса, хумхануллăн итлесе тăратăп. Мĕн тери пысăк савăнăç: манăн терт — сборникре! Куншăн эп пуринчен ытла юратнă Петр Петрович умĕнче тивĕçре. Эпĕ çак тивĕçе ун умĕнче пурнăçлама тивĕç. Пурнăçлăп.

*1951 çулхи мартăн 21-мĕшĕ*

«Литгазетăра» литературăпа искусство енĕпе Сталинла преми илнисен списокне пичетленĕ. Питех те шел, Петр Петрович, «Евгений Онегина» тăратнăскер, спискă кĕреймен. Маншăн вăл лауреат ятне илни хама чысланă пекех пулнă пулĕччĕ. Ун патне çитес вăхăтрах пĕтĕм чунтан-чĕререн çыру çырса ямалла пулать-ха.

*1951 çулхи апрелĕн 11-мĕшĕ*

Ыран Хусанкай вечерне ирттерме шутласа хутăмăр. Каçпа хатĕрлентĕм. А.С.Семенов патне кĕрсе «Уяртсан» (Хусанкай) илсе тухрăм. Çапла, вăл Есенин хулиган хыççăн кайсан, нумай арпашмалла. Унчченхи Хусанкайпа хальхине танлаштарсан çывăхне те пымасть хальхи Хусанкай — чи çирĕп, чи ăслă, чи хастар, чи тĕрĕс, чи йĕркеллĕ сын!

*1951 çулхи июлĕн 30-мĕшĕ*

Кружок занятийĕ: «П.П.Хусанкай пурнăçĕпе творчестви, сăввисем». Пурнăçĕ çинчен Николайăн доклад тумаллаччĕ, вăл пулмарĕ. Вара хамах иртгерсе ятăм.

*1951 çулхи августăн 2-мĕшĕ*

Ирхине аппасем патĕнче Петр Петрович валли çыру çыртăм, ятăм сăвăсене: «Пĕр пучах», «Париж ачи», «Колхоз хĕрĕсен юрри», «Критик-активист», «Хикмета».

*1951 çулхи августăн 13-мĕшĕ*

Кружок занятийĕ. В.С. Антонов та пулчĕ. 4 ачапа иртгертĕмĕр. Петр Петровичăн «Тăван çĕршывĕ».

*1951 çулхи сентябрĕн 24-мĕшĕ*

...Кайран Пĕтĕм тĕнчери Мир совечĕ пилĕк аслă держава хушшинче мире çирĕплетесси çинчен Чĕнсе калани айне алă пусатăп. Петр Петровича — Республикăри мире сыхлакансен Комитечĕн членне суйланăскерне — аса илетĕп...

*1951 çулхи октябрĕн 12-мĕшĕ*

Паянхи кун маншăн хаваслă та, кăшт тĕтреллĕрех те. Петр Петровичран çыру. Сăвва юратнă пекрех туйăнать. «Ч. К»-ре кăлярма шутлать.



*1951 çулхи декабрĕн 31-мĕшĕ*

...Литературăра кăштах ăнăçусем пур. Пĕрремĕш хут кĕнекере пичетленме тĕл килчĕ, пĕрремĕш хут литература, поэзи мĕнне тĕплĕ ăнланса илтĕм, Петр Петровичпа тата та çывăхлантăмăр. Ю. Скворцовпа та пире çак çул паллаштарчĕ.

*1952 çулхи январĕн 15-мĕшĕ*

...Пысăк савăнăç (телеех) — Петр Петровичран çыру. Питех те шухăша ячĕ, хавхалантарса ĕçлес кăмăла, шанчăка хĕм хыптарчĕ. Умри перспектива ун канашĕсен çуттинче питех те уçă курăнса выртать. Ун пек Улăпсем малалла та пулăшсан — утма, кĕрешме вăйхал çуралсах пырать. 1953 çул... Вăл мана Мускав патне çул уçмалла. Унччен — ĕç, кĕрешӳ, вĕренӳ.

*1952 çулхи майăн 21-мĕшĕ*

Юлашки вăхăтра питĕ тунсăх пусать. Петр Петровичран чылайранпа çыру илменччĕ. Шалт аптраса,

тунсăхласа çитрĕм, хам çырас тенĕччĕ — паян — çыру! Çав тери пысăк хаваслăх кÿчĕ. «Эпĕ сана хамăн корр.-сенчен чи шанчăкли тесе шутлатăп» тени питех те çĕклерĕ, çав вăхăтрах нумай шухăш кÿртрĕ пуçа. Ку шанчăка тÿрре кăларма нумай ĕçлемелле-ха!

Май вĕçĕнче чăваш писателĕсен III съезчĕ уçăлмалла. Мана чĕнтерес пек çырать. Иванов палăкне уçнă çĕрте вулама сăвă çырса килме хушать — «пĕрре Атăл хумĕсем итлесе ăнтан кайччăр!»

Петр Петрович çырăвĕсем çинчен Всеволод Иванов Горький çырăвĕсем пирки калана сăмахсене аса илес килет:

«Хотелось бы описать впечатление от его писем. Но как это трудно! Помню ощущение ползущей по всему телу и смущенности. За его письмом всегда чувствуешь озабоченное и вопросительное лицо, стремление тебе помочь и чувствуешь, что это не только стремление тебе помочь, но и ты, помогая самому себе, поможешь тем самым ему, этому неистовому и ненасытному творцу. Читаешь письмо — и на сердце словно разгорается веселый и жаркий костер, при свете которого вокруг такая красота, которую почти нельзя описать: ее можно лишь почувствовать».

*1952 çулхи июнĕн 7-мĕшĕ*

Петр Петрович съездра, президиумран мана курчĕ те кулса илчĕ. Вăл сулахай енче (пиртен — сылтăм енче) ларать, çутă тикĕс мар ÿкет. Темшĕн вăл мана, çутă куçлăскер, çутă çинче кăвакрах, хулăм пит-куçлă курăнса, Пастернак Бориса аса илтерчĕ.

